25-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 15 пус.

1942
МАЙ
21
КĔҪНЕРНИКУН
116(6051) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Пушара хирӗҫ кӗрешес ӗҫри йӗркелӗхшӗн

Обществӑллӑ харпӑрлӑха тата уйрӑм ҫынсен пурлӑхӗсене сыхласа усрасси — совет халӑхӗ умӗнче тӑракан пысӑк ӗҫсенчен пӗри. Ҫак ӗҫе пурнӑҫа кӗртесси пире пур енчен те сыхӑлӑхлӑ пулма, уйрӑмах пушарсенчен сыхланма хушать.

Юлашки вӑхӑтра пирӗн Чӑваш республикинче пушара хирӗҫ кӗрешес ӗҫе лайӑхрах туса пыма тытӑнчӗҫ. Нумай предприятисене, колхозсен вититсене, амбарӗсене вӗсен таврашӗнчи ӑпӑр-тапӑрсемпе ҫӳп-ҫапсенчен тасатнӑ. Хуласенче, предприятисенче, ялсенче, колхозсенче, совхозсенче нумайӗшӗнче пушар хатӗрӗсем юсавлӑ усранаҫҫӗ. Вут кӑвара сӳнтерме килҫуртсем патне хӑйӑр тата шыв хатӗрлесе лартнӑ. Пушар тухасран сыхланас тӗлӗшпе халӑх хушшинче ӑнлантарас ӗҫе чылай хуласемпе ялсенче яланах туса пыраҫҫӗ.

Пушара хирӗҫ кӗрешес ӗҫе колхозсенче лайӑх йӗркеленӗшӗн иртнӗ ҫулта икӗ ялсовет исполкомӗн председательне тата 9 колхоз председательне премисем панӑ. Ҫав вӑхӑтрах колхозсенчи ирӗклӗ пожарнӑй дружинӑсен начальникӗсене 28 ҫынна премиленӗ, вӗсен шутӗнче Вӑрмар районӗнчи Арапуҫ колхозӗн ирӗклӗ пожарнӑй дружинин начальникӗ Г. Н. Храмов юлташ пулнӑ. Вӑл хӑйӗн ӗҫӗнче ялсовет исполкомӗпе тата колхоз правленийӗпе тачӑ ҫыхӑнса тӑнӑ, вӗсем ӑна ӗҫре пулӑшса пынӑ. Дружинӑра тӑракан ҫынсене пушарсене хирӗҫ кӗрешме, тӑшман сывлӑшран вут тивертекен бомбӑсем пӑрахас-мӗн пулсан, вӗсене хӑвӑрт сӳнтерме вӗрентнӗ, пушара сӳнтерме кирлӗ шыва пухса усрама пӗвесем тунӑ, лашапа хурал тӑрассине, кашни вунӑ килре пӗр ҫын яланах дозорта тӑрассине йӗркеленӗ. Ҫавӑн пек лайӑх ӗҫлекен пожарнӑй дружинӑсем республикӑра сахал мар.

Анчах республикӑри хӑшпӗр предприятисемпе колхозсенче пушара хирӗҫ кӗрешес ӗҫе кирлӗ пек организацилемен-ха. Сӑмахран, Ҫӗньял-Ойкас ялсоветӗнчи (Шупашкар р.) «Пятилетка» тата «Араслан» колхозсенче пушара хирӗҫ кӗрешмелли хатӗрсем сахал, пуррисем те юсавлӑ мар, колхозсен амбарӗсемпе вититсем патӗнче хурал тӑмаҫҫӗ, пушара сӳнтерме вӗрентес тӗлӗшпе халӑх хушшинче ӑнлантару ӗҫне туса пыни ҫук. Паллах ӗнтӗ, ҫак питех те ответлӑ ӗҫе хак паманнине халӗхи вӑхӑтра тӳсме ҫук. Вӑрҫӑ пынӑ вӑхӑтра пушара хирӗҫ кӗрешес ӗҫре никӑҫанхи пек мар ҫирӗп йӗркелӗх пулмалла.

Ҫуллахи кӗнӗ май пушарсем пулма пултарас хӑрушлӑх ӳсет. Ҫавӑнпа та предприятисемпе колхозсенче, ялсенче, килҫуртсенче вут-кӑвара ҫийӗнчех сӳнтерме кирлӗ япаласем пурте (насоссем, витресем, багорсем, пусмасем, пуртӑсем т. ыт. те) хатӗр пулмалла. Кашни ҫурт сывӑхнех хӑйӑр илсе пырса куллалалла тата шыв тултарнӑ кадка-пичкесем лартмалла. Ҫавӑнпа пӗрлех предприятисемпе колхозсенче яланах хурал пулни кирлӗ. Кашни хуларах, кашни ялтах лашасемпе хурал тӑракансем, дозорсем талӑкӗпех пожарнӑй сарайсем тата ытти ҫуртӗрсем патӗнче пулмалла. Сторожсемпе дозорсен уйрӑмах обществӑллӑ харпӑрлӑха куҫ шӑрҫине сыхланӑ пек сыхлас пулать.

Пушара хирӗҫ кӗрешекен дружинӑсен йышӗ юлашки вӑхӑтра чылаях ӳлшӑнчӗ. Хӗрлӗ Ҫар ретне кайнисем вырӑнне ҫӗнӗ ҫынсем тӑчӗҫ.

Ҫавӑнпа та пожарниксене тата ирӗклӗ пожарнӑй дружинӑсенче тӑракан ҫынсене хӑйсене тивӗҫлӗ ӗҫсене тума вӗрентмелле. Вӗсен хӑйсен ӗҫне тӗплӗн вӗренсе ҫитмелле. Пушар сӳнтерме хӑвӑрт тухса кайма, сӳнтармӗ ҫӗрте васкаса ӗҫлеме, насоссемпе тата огнетушительсемпе пӗлсе усӑ курма вӗренес пулать.

Ҫавӑнпа пӗрлех пушарсене хирӗҫ кӗрешме мӗнпур ӗҫҫыннисене вӗрентсе пымалла. Сывлӑшран тапӑннинчен тата химиллӗ тапӑнуран сыхланма пур граждансене те обязательнӑй йӗркепе вӗрентесси ҫинчен СССР Совнаркомӗ постановленийӗ йышӑннӑ хыҫҫӑн осоавиахим организацисем халӑха ПВХО ӗҫне вӗрентес тӗлӗшпе пысӑк ӗҫ турӗҫ. Ӗҫҫыннисене бомбӑсенчен сыхланма, вут тивертекен бомбӑсене сӳнтерме вӗрентрӗҫ. Мускаври, Ленинградри тата ытти хуласенче вут тивертекен бомбӑсене ватӑ старниксем те, ачасем те пултаруллӑн сӳнтерни пирӗн ӗҫҫыннисем пӗлеҫҫӗ. Ку хуласенчи опытран ҫакӑ курӑнса тӑрать: пушара хирӗҫ кӗрешмешкӗн, вут-кӑвар тухасран сыхланмашкӑн кашни ӗҫҫынни тӑрӑшмалла.

Хула совечӗсемпе ялсовет исполкомӗсен, предприяти руководителӗсен, колхоз правленийӗсен пушара хирӗҫ кӗрешес ӗҫре ҫирӗп йӗркелӗх туса хумалла.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Майӑн 19-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Майӑн 19-мӗшӗнче Харьков енче пирӗн войскӑсем наступлениллӗ ҫапӑҫусем туса пынӑ, противникӑн контратакисене сире-сире ярса, малалла куҫнӑ.

Изюм—Барвенково енче наступлени пуҫланӑ фашистла войскӑсене хирӗҫ ҫапӑҫусем пулса пыма тытӑннӑ.

Керчь ҫурутравӗ ҫинче Керчь хули районӗнче ҫапӑҫусем пулса пынӑ.

Тӗрӗсленӗ даннӑйсем тӑрӑх, майӑн 17-мӗшӗнче нимӗҫсене малтан пӗлтернӗ пек 64 самолет мар, 73 самолет персе антарнӑ.

Майӑн 18-мӗшӗнче нимӗҫсен 43 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн 17 самолет пӗтнӗ.

* * *

Майӑн 18-мӗшӗнче пирӗн авиаци чаҫӗсем фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче нимӗҫсен 26 танкне, войскӑсемпе грузсем турттарса пыракан 100 автомашинине ытла, боеприпассем турттарса пыракан 35 лавне, 11 полевой тата зенитнӑй орудине пӗтерсе тӑкнӑ, э сиенленӗ, артиллерин тата миномётсен темиҫе батарейине пусарса лартнӑ, чугунҫул ҫинчи состава ҫӗмӗрнӗ, противникӑн пехотине виҫӗ ротӑна ҫити сапаласа янӑ, вӗсенчен пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Харьков енче пирӗн войскӑсем ӑнӑҫлӑ наступлени туса пынӑ. Нимӗҫсем, танксемпе контратака туса, пирӗн чаҫсем малалла куҫса пынине чарса лартма хӑтланнӑ, анчах та вӗсен контратакисем ӑнӑҫлӑ пулман. Пӗр участокра гитлеровецсем 90 танк ҫапӑҫӑва кӗртсе янӑ. Сапунов юлташ командир пулса ертсе пыракан подразделенири артиллеристсем, пӗр контратака хыҫҫӑн тепӗр контратакӑна сире-сире ярса, Хасин юлташ командир пулса ертсе пыракан чаҫри танкистсемпе пӗр-пӗрне пулӑшса ҫапӑҫса, нимӗҫсен 46 танкне пӗтерсе тӑкнӑ. Тепӗр участокра Рогачевский юлташ командир пулса ертсе пыракан чаҫри боецсем противникӑн пехотипе танкӗсене хирӗҫ пынӑ хаяр ҫапӑҫура 250 гитлеровеца, 16 танк пӗтерсе тӑкнӑ, трофейӑсем тытса илнӗ. Сафронов юлташ командир пулса ертсе пыракан подразделени пӗр ҫапӑҫура противникӑнне 6 оруди, 2 миномет, 8 пулемет, 10.000 патрон тата ытти трофейӑсем те тытса илнӗ.

* * *

Калинин фрончӗн уйрӑм участокӗсенче противник темиҫе атака тунӑ, атакӑсене пурне те противника пысӑк ҫухатусем кӳрсе сире-сире янӑ. Нимӗҫсен салтакӗсемпе офицерӗсене 1.000 ҫынна ытла вӗлернӗ. Пирӗн боецсем артиллерин 3 батарейине, миномётсен пӗр батарейине пӗтерсе тӑкнӑ тата противникӑн боеприпасӗсен 3 складне сирпӗнтернӗ. Пӑшалсемпе пулеметсенчен персе, нимӗҫсен пӗр самолетне ҫӗмӗрнӗ.

* * *

Гуляев юлташӑн чаҫӗнчи артиллеристсем (Калинин фрончӗ) полевой орудирен персе противникӑн пӗр самолетне ӳкернӗ. Парашютпа сикнӗ летчик-офицера тыткӑна илнӗ.

* * *

Орлов сержантпа Гордиенко красноармеец противник йышӑнса тӑракан пункта кӗрсе кайнӑ та чӳрече витӗр нимӗҫсен батальонӗн штабне кӗнӗ. Хӑюллӑ разведчиксем штабри офицера вӗлернӗ, штаб документӗсене пурне те хӑйсен чаҫне илсе пырса панӑ.

* * *

Пирӗн подразделени Ж. ялӗн пӗр пайне йышӑнса илнӗ. Малалла куҫма противник пулемечӗсем вӑйлӑн пени кансӗрленӗ. Рябов красноармеец гитлеровецсен окопӗ патне вӑрттӑн шуса пынӑ та гранатӑсем вӑркӑнтарса икӗ пулемет расчечӗсене пӗтерсе тӑкнӑ. Хӑюллӑ боец ҫавӑнтах пулемет умне выртнӑ, тӑшман ҫине пеме хатӗрленнӗ. Ҫав хушӑра ун патне ҫывӑхах хӗҫпӑшалсӑр нимӗҫ салтакӗ шуса ҫитнӗ те вырӑсла: «Мана ан пер. Эпӗ чехославянин», тенӗ. Хӑйне чех тенӗ салтак нимӗҫсен пулемечӗ умне выртнӑ та гитлеровецсем ҫине хаяррӑн пеме пуҫланӑ. Ҫапӑҫу пӗтнӗ хыҫҫӑн ҫакна пӗлнӗ: Рябов юлташа ӑнсӑртран пулӑшнӑ ҫын Судет облаҫӗнчен вӑйпа ирӗксӗрлесе нимӗҫ ҫарне илнӗ чех Эрнест В. пулнӑ.

* * *

Пирӗн чаҫсем нимӗҫсен 208-мӗш пехотнӑй полкӗнчи 3-мӗш батальон командирӗ ҫырнӑ приказа тытса илнӗ. Ку приказра «батальона мартӑн 23-мӗшӗнче тата апрелӗн 9-мӗшӗнче ҫитнӗ пополнение» хак панӑ. Унта ҫапла каланӑ: «Пополнение нумай вӗрентмелле-ха. Резервистсен ҫапӑҫура кирлӗ паха енсем ҫителӗксӗр». Урӑхла каласан, нимӗҫ батальонӗн командирӗ ҫакна йышӑнать: Совет Союзӗпе Германи хушшинчи фронтра тӳсекен пысӑк ҫухатусем вырӑнне ҫӗнӗ вӑй тӑратас тӗлӗшпе гитлеровецсем ҫапӑҫусене нимӗн те вӗрентмен салтаксене хӑваласа кӗртеҫҫӗ.

* * *

Харьков енчи участоксенчен пӗринче 23-мӗш танковӑй дивизири нимӗҫ салтакӗсен ушкӑнӗ хӑйсен ирӗкӗпе тыткӑна парӑннӑ. Савсенчен пӗри ефрейтор Л. ҫапла каласа панӑ: «Эпир Францирен ку фронта килни икӗ эрне ҫитрӗ. Унтах, Париж районӗнех, пирӗн пата нимӗҫ войскисем поражени тӳсни ҫинчен калакан усӑмсӑр хыпарсем ҫитетчӗҫ. Кунта эпир вӑл чӑнахах ҫапла иккенне хамӑр куҫпах куртӑмӑр. Вырӑс хӗҫпӑшалӗ питех те вӑйлӑ, вырӑс салтакӗсем ҫавтери паттӑрри—пире чӑн-чӑнах тӗлӗнтерчӗ. Ку вӑрҫа шанчӑксӑр вӑрҫӑ тесе шутласа, урӑх нимӗнле майпа та ҫӑлӑнса юлассине пӗлмесӗр, эпир ирӗккӗнех тыткӑна парӑнтӑмӑр».

* * *

Голландире нимӗҫсен оккупациллӗ влаҫӗсем Голланди офицерӗсене пурне те 24 сехет хушшинче регистрацие пыма хушнӑ. Регистрацие пынӑ офицерсене пурне те арестленӗ те Германие янӑ. Каланӑ тӑрӑх, гитлеровецсем Голланди офицерӗсене вӗсем пусмӑрҫӑсене хирӗҫ ҫӗклекен кӗрешӗве ертсе пыма пуҫлассинчен хӑраса арестленӗ.

Майӑн 20-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Майӑн 20-мӗш ирӗн тенӗ чух ҫӗрле Харьков енче пирӗн войскӑсем наступлениллӗ ҫапӑҫусем туса пынӑ.

Керчь ҫурутравӗ ҫинче Керчь хули районӗнче хӗрӳллӗ ҫапӑҫусем малалла пулса пынӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче нимӗнле паллӑ ӗҫсем пулман.

Баренц тинӗсӗнче противникӑн транспортне путарнӑ.

* * *

Харьков енчи уйрӑм участоксенче кӗрешекен пирӗн чаҫсем, гитлеровецсене хирӗҫ кӗрешсе, нимӗҫсен салтакӗсемпе офицерӗсене 1.650 ҫынна вӗлерсе пӗтернӗ. 27 танка, боеприпассен складне тата продукцисен складне пӗтерсе тӑкнӑ, пехота пӑшалӗнчен персе нимӗҫсен 3 самолетне ӳкернӗ. Пирӗн боецсем противникӑнне 37 оруди, 57 миномет, 19 пулемет, 340 винтовка, 10.000 снаряд, 40.000 патрон, 60 километр тӑршшӗ кабель, йӗплӗ пралуксем хунӑ 5 вагон, 3 радиостанци тата ытти ҫар пурлӑхӗсем тытса илнӗ. Тыткӑна илнисем пур.

* * *

Пирӗн кавалери чаҫӗ, Калинин фронтӗнче противник тылӗнче кӗрешекенскер, халӑх пурӑнакан темиҫе пункта нимӗҫ захватчикӗсенчен ирӗке кӑларнӑ. Гитлеровецсене хирӗҫ ҫапӑҫса, кавалеристсем нимӗҫсен 700 салтакӗпе офицерне, 25 пулеметне, автоматлӑ туппине, шултӑра калибрлӑ 2 пулеметне пӗтерсе тӑкнӑ тата боеприпассен складне сирпӗнтерсе янӑ. 12 пулемет, автоматлӑ 2 тупӑ, 15 автомат, снарядсем, патронсем тата ручной гранатӑсем тытса илнӗ. Тыткӑна илнисем пур.

* * *

Хӗвеланӑҫ фронтӗнчи участоксенчен пӗринче пирӗн артиллери нимӗҫсен 10 блиндажне ҫӗмӗрнӗ, артиллерин 3 батарейине тата миномётсен 2 батарейине пӗтерсе тӑкнӑ, противникӑн пехотине пӗр батальона ҫити сапаласа янӑ.

* * *

Румынсен 18-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 92-мӗш полкӑн 5-мӗш ротинчен тыткӑна лекнӗ салтак Николай Драгович ҫапла каласа панӑ: «Пирӗн салтаксем вырӑссен атакисенчен питӗ хӑраҫҫӗ. Ҫав атакӑсенчен пӗри пирӗн полка пӗтӗмӗшпех арпаштарса ячӗ. Салтаксем мӗнпур хӗҫпӑшала тата хӑйсен япалисене ҫапӑҫу хирӗнче пӑрахса хӑварса тарчӗҫ. Офицерсен приказӗсемпе вӗсем хӑратнисене никам та итлемерӗ. Полк питех те пысӑк ҫухатусем тӳсрӗ, вилнисемпе аманнисем тата тыткӑна лекнисем нумай пулчӗҫ. Виҫӗ кун иртсен кӑна нимӗҫсем тата вӗсен жандармерийӗ сапаланса кайнӑ салтаксене тытса чарса пухма пултарчӗҫ. Ҫак ҫапӑҫу хыҫҫӑн 3-мӗш батальон пачах пӗтсе ларчӗ».

* * *

Пирӗн чаҫсем хӗссе пынине пула чакнӑ чухне нимӗҫсем Большая Гомольша ялӗнче мирлӗ халӑха 300 ҫынна ытла асаплантарса вӗлернӗ тата персе пӑрахнӑ. Кӳршӗри ялта гитлеровецсем ҫуртсене ҫунтарса янӑ, колхозниксен пӗтӗм пурлӑхӗсене тата продукчӗсене туртса илнӗ, старниксемпе ҫамрӑксене 25 ҫынна персе вӗлернӗ.

* * *

Финляндири лару-тӑру продовольстви тӗлӗшпе кунран кунах начарланса пырать. Хельсинкире тата ытти хуласенче пурӑнакансем выҫӑ лараҫҫӗ. Финляндин влаҫра ларакан ушкӑнӗ, катастрофа пуласси не вӑраха хӑварас тесе, хресченсен юлашки тӗштырӑсене вӑйпах туртса илет. Нюланд кӗпӗрнинче полици хресченсенне акма хатӗрленӗ тӗштырра та туртса илет. Тарӑхса кайнӑ хресченсем хирӗҫ тӑраҫҫӗ тата тӗштырра ҫӗре чавса пытараҫҫӗ. Чылай вулӑҫсенче хресченсемпе полици хушшинче тытӑҫусем пулса иртнӗ.

Государствӑн Ӗҫ Резервӗсен системинче ӗҫлекен работниксене тата вӗренекенсене наградӑлани

Оборона промышленноҫӗпе транспорт валли квалификациллӗ рабочисемпе массӑллӑ профессиллӗ рабочисем хатӗрлес тӗлӗшпе правительство панӑ заданисене ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртнӗшӗн, СССР Верховный Совет Президиумӗн Указӗ тӑрӑх, Государствӑн Ӗҫ Резервӗсен системинче ӗҫлекен работниксене тата вӗренекенсене наградӑланӑ.

Ленин орденӗпе — Мускаври 10-мӗш номерлӗ ремесленнӑй училищӗри старши мастера В. С. Анюхина, Куйбышев облаҫӗнчи 1-мӗш номерлӗ ремесленнӑй училищӗре производствӑна вӗрентекен мастера Н. П. Бутарина, Азербайджан ССР-ӗнчи 6-мӗш номерлӗ ремесленнӑй училищӗре производствӑна вӗрентекен мастера Али Гусейн Наджаф Кули оглы Гаджиева, СССР Совнаркомӗ ҫумӗнчи Ӗҫ Резервӗсен Главнӑй Управлени начальникӗн заместительне Г. И. Зеленкона, Горький облаҫӗнчи 6-мӗш номерлӗ ремесленнӑй училищӗре производствӑна вӗрентекен мастера Г. М. Кузнецова, СССР Совнаркомӗ ҫумӗнчи Ӗҫ Резервӗсен Главнӑй Управленин начальникне П. Г. Москатова, СССР Совнаркомӗ ҫумӗнчи Ӗҫ Резервӗсен Главнӑй Управлени начальникӗн заместительне Я. Т. Ремизова тата Ӗҫ Резервӗсен Ленинград хулинчи Управленин начальникне Г. Т. Смирнова наградӑланӑ.

Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав орденӗпе 13 ҫынна наградӑланӑ.

Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр орденӗпе 7 ҫынна наградӑланӑ.

«Знак почета» орденпа 61 ҫынна наградӑланӑ.

«За трудовую доблесть» медальпе 140 ҫынна наградӑланӑ.

«За трудовое отличие» медальпе 225 ҫынна наградӑланӑ. (ТАСС).

Электропромышленность Халӑх Комиссариачӗн Верх-Исетскри металлурги заводӗнче ӗҫлекен работниксене наградӑлани

Ҫӗршыв оборони валли специальнӑй хурҫӑ тӑвас тӗлӗшпе правительство заданийӗсене кӑтартуллӑн пурнӑҫа кӗртнӗшӗн, СССР Верховный Совет Президиумӗн Указӗ тӑрӑх, Электропромышленность Халӑх Комиссариачӗн Верх-Исетскри металлурги заводӗнче ӗҫлекен работниксене наградӑланӑ.

Ленин орденӗпе—сталевара Н. Х. Базетова, сталевара Г. Г. Захарова тата завод директорне Ф. А. Раткевича наградӑланӑ.

Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав орденӗпе 3 ҫынна наградӑланӑ.

«Знак почета» орденпа 14 ҫынна наградӑланӑ.

«За трудовую доблесть» медальпе 15 ҫынна,

«За трудовое отличие» медальпе 20 ҫынна наградӑланӑ. (ТАСС).

Хӗрачасем ҫар ӗҫне вӗренеҫҫӗ

ЕЛЧӖК. Хӗрачасене ҫар ӗҫне вӗрентме районра вӗренӳ пункчӗ организациленӗ. Халӗ пурӗ 45 хӗрача вӗренеҫҫӗ. Е. Никонова, М. Скворцова, Филатова тата ытти нумай хӗрачасем ҫар ӗҫне пысӑк тимлӗхпе вӗренеҫҫӗ. Теорие вӗреннӗ хыҫҫӑн халӗ тактикӑллӑ занятисем пулса иртеҫҫӗ.

Вӗренӳ пуҫланнӑранпа вӗренӳ пункчӗнче 6 боевой листок кӑларнӑ.

И. ВАСИЛЬЕВ.

Оборона гектарӗсем

КАНАШ. Районри пур колхозсем те Краснодар крайӗнчи Выселковски районри Н. К. Крупская ячӗпе тӑракан ялхуҫалӑх артелӗнчи колхозниксемпе колхозницӑсем Совет Союзӗнчи колхозниксемпе колхозницӑсене чӗнсе каланине ырласа йышӑнчӗҫ. Колхозниксемпе колхозницӑсем хӑйсем умне кӑҫал гектартан 120 пӑтран кая мар тӗштырӑ илес задача лартнӑ. Ӑна халӗ ӗҫпе пурнӑҫлаҫҫӗ.

Вӑтакас-Татмӑш ялсоветне кӗрекен колхозсем, Н. К. Крупская ячӗпе тӑракан колхоз колхозникӗсенчен пример илсе, оборона фондне хывма планран иртерсе 10 гектар тырӑ, Чкалов ячӗпе тӑракан колхоз 3 гектар тулӑ, «Динамо» колхоз пӗр гектар вир, «Париж Коммуни» колхоз пӗр гектар, «1-ое Мая» колхоз 6 гектар тырӑ акаҫҫӗ.

Т. ТУРХАН.

УКЕРЧӖК ҪИНЧЕ (сулахайран сылтӑмалла): Социализмла Ӗҫ Геройӗ А. Д. Швецов, 16 ҫулти комсомолец Ваня Клюев, Совет Союзӗн Геройӗсем — старши лейтенант А. М. Перепелица тата капитан Б. В. Бирюков Кремльте орденсемпе медальсем илнӗ хыҫҫӑн.

Ф. КИСЛОВ фотоӳкерчӗкӗ (ТАСС фотохроники).

Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ фрончӗсенче

НИМӖҪСЕН ПАРАШЮТЛӐ ДЕСАНТНЕ АРКАТНИ

КӐНТАР-ХӖВЕЛАНӐҪ ФРОНЧӖ, майӑн 17-мӗш. (**ТАСС спецкорӗ**). Пирӗн войскӑсен Н-ски стрелковӑй чаҫӗ, вӑйлӑ ҫапӑҫура нимӗҫсен оборонине ҫӗмӗрсе, вӗсем тӑракан яла хупӑрласа илнӗ. Ҫак ялта ҫирӗпленсе ларнӑ нимӗҫсем хӑйсем патне ҫӗнӗрен ҫар ушкӑнӗ тата танксем пырасса кӗтнӗ, пирӗн войскӑсене парӑнмасӑр ҫапӑҫса тӑнӑ. Анчах та пулӑшу пыман, ҫакна пула вӗсен вӑйӗ сехетрен сехете чакса пынӑ. Каҫалапа сывлӑшра фашистсен темиҫе бомбардировщикӗ тата истребителӗсем курӑнса кайнӑ. Бомбардировщиксем пирӗн войскӑсем тӑракан вырӑна бомбӑсем пӑрахма тытӑннӑ, анчах вӗсен бомбисенчен нимӗнле сиен те пулман. Ҫакӑн хыҫҫӑн ҫав самолетсем ҫинченех парашютпа темӗнле грузсем пӑрахнӑ.

Парашютсене ҫил пирӗн позици еннелле вӗҫтерсе пынӑ. Брезентпа чӗркесе пӑрахнӑ тюксем ӑшӗнче фашист салтакӗсем валли пӑрахса панӑ продовольстви тата боеприпас таврашӗсем пулнӑ. Вӑл япаласем пирӗн боецсен аллине лекнӗ.

Часах нимӗҫ самолечӗсен тепӗр ушкӑнӗ курӑннӑ. Вӗсем те, пирӗн войскӑсене ҫӗр ҫумне хӗссе лартас тесе пулас, малтанах бомбӑсем ыватнӑ. Унтан тӑшман самолечӗсем юханшыв ҫийӗнче тата ял тӗлӗнче вӗҫсе ҫаврӑнкаланӑ та, сухаласа пӑрахнӑ уя каллех пӗр-икӗ бомба пӑрахнӑ хыҫҫӑн, аякра хуралса ларакан вӑрман еннелле вӗҫсе кайнӑ. Тӑшман мӗн хӑтланнине пирӗн Н-ски чаҫӑн гвардеецӗсем тинкерсе пӑхса тӑнӑ. Вӗсем самолетсенчен хура пӑнчӑсем уйрӑла-уйрӑла аннине тата ҫав пӑнчӑсем ҫийӗнче парашютсем пулнине асӑрханӑ. Ун пеккисем пӗр 120 тарана яхӑн шутланнӑ. Ку ӗнтӗ хупӑрласа илнӗ ялти нимӗҫсене пулӑшма антаракан парашютлӑ десант пулнӑ.

— Утсем ҫине! — илтӗннӗ команда сасси. Ҫав самантрах сывлӑшран анакан парашютистсем енне утлӑ гвардеецсем вӑркӑннӑ. Фашистсенчен сахалрахӑшӗ ҫеҫ ҫӗр ҫине чӗррӗн анса ҫитме ӗлкӗрнӗ, тӗл лектернӗ пульӑсемпе вӗсенчен нумайӗшӗ сывлӑшрах вилнӗ. Пульӑран хӑтӑлса аннисене казак хӗҫӗсем касса вакланӑ. Парашютлӑ десанта пӗр сехет хушшинчех пӗтерсе тӑкнӑ. Тепӗр кунне нимӗҫсем татах икӗ десант антарнӑ, ҫак десантсене те малтанхи пекех пӗтернӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн пирӗн войскӑсем ялта тӑракан фашистсен гарнизонне те часах йӑлтах аркатса тӑкнӑ.

Украина партизанӗсем нимӗҫ оккупанчӗсене хирӗҫ тӑрасси вӑйлансах пырать

КӐНТАР-ХӖВЕЛАНӐҪ ФРОНЧӖ. (**ТАСС спец. корреспонденчӗ**). Нимӗҫсем оккупациленӗ Харьков таврашӗнчи районсенче ҫапӑҫакан партизанла отрядсене ҫурхи хӗвел ҫӗнӗ вӑй кӗртнӗ пекех туйӑнчӗ. Вӗсем боеприпассемпе салтаксем турттаракан поездсене ӳпӗнтере-ӳпӗнтере яраҫҫӗ. Шоссепе грунт ҫулӗсем тӑрӑх партизансен гранатӑсем лекнипе ҫӗмӗрӗлнӗ автомашинӑсемпе лавсем сапаланса выртаҫҫӗ. Фашистсен карательнӑй отрячӗсем, жандармӗсемпе полицийӗсем нимӗҫ захватчикӗсем вӑхӑтлӑха туртса илнӗ территорие контрольлесе тӑма пултараймаҫҫӗ. Украина хресченӗсем хирӗҫ тӑрасси кунран кун ӳсет. Вӗсем, тискер террора пӑхмасӑрах, ылханлӑ оккупантсен пур распоряженийӗсене те пурнӑҫламасӑр тӑраҫҫӗ, партизансене хастарлӑн пулӑшаҫҫӗ.

Районсенчен пӗрринче ҫакӑн пек факт пулнӑ. Нимӗҫсем вӑрман хатӗрлеме ҫӗршер хресченсене хӑваласа пынӑ. Ҫакӑн ҫинчен партизансем пӗлнӗ те хӑйсен представительне вӑрман делянкине янӑ. Вӑл хресченсемпе калаҫнӑ та фашистсен ирӗксӗр ӗҫӗнче пӗр ҫын та юлман — пур хресченсем те ялсем тӑрӑх саланнӑ, нумайӑшӗсем ҫавӑнтах партизансен отрячӗ ҫумне пӗрлешнӗ.

Ҫак вӑрмантах нимӗҫсен танкӗ лачакана кӗрсе ларнӑ. Оккупантсем машинӑна туртса кӑларас тесе, хресченсене 4 кун хушши пухнӑ. Вӗсем хресченсене авари пулнӑ вырӑна хӑваласа пыма пултарнӑ, анчах вӗсене танк туртса кӑларттараймаң. Танк, башня таран тенӗ пекех лачакана кӗрсе ларнӑскер, ҫаплипех юлнӑ.

Оккупантсен нимӗнле хӑратӑвӗсемпе репрессийӗсене пӑхмасӑрах, хресченсем ҫӗр ӗҫлеме итлемеҫҫӗ.

— Ылханлӑ нимӗҫшӗн ӗҫлеместпӗр! — пӗр сасӑпа калаҫҫӗ вӗсем.

Фронт урлӑ каҫакансемпе пирӗн самолетсем Сталин юлташӑн майӑн пӗрремӗшӗнчи приказне пичетленӗ пиншер листовкӑсене Украинӑри оккупациленӗ районсене илсе ҫитернӗ. Ҫулпуҫӑн кашни совет ҫыннин чӗри мӗнпе туллине пӗлтерекен сӑмахӗсем — 1942 ҫула нимӗҫсен фашистла захватчикӗсене татӑклӑн аркатса тӑкмалли ҫулталӑк тӑвас тенӗ сӑмахӗсем — ялтан яла сӳреҫҫӗ.

Д. ЩУКИН.

121 пионер ПВХО значокӗсем илнӗ

КАЛИНИНО. Асакассинчи туллимар вӑтам шкулта ПВХО ӗҫне вӗренессине лайӑх йӗркеленӗ. Ку таранччен пурӗ 121 пионер ПВХО значокӗсем илнӗ. Ачасене ПВХО ӗҫне вӗрентес тӗлӗшпе К. Куликова тата Т. Иванова учительницӑсем тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ.

Б. ШОРНИКОВ.

Çурхи ĕçсен фронтĕнчи кĕрешĕве вăйсăрлатмалла мар

Район тĕштырăсем акас плана 9 ĕç кунĕнче вĕçлерĕ

КУКЕÇ, майăн 20-мĕш. (Телефонпа). Шупашкар районĕнчи колхозсен план тăрăх çурхи тĕштырăсене 8.000 гектар çине акса хăвармалла пулнă. Сталин юлташ майăн 1-мĕшĕнче панă приказпа хавхаланса, районри колхозниксемпе колхозницăсем çуракинче пысăк çĕкленӳпе ĕçлерĕç. Тĕштырăсем акас плана майăн 19-мĕш тĕлне ытлашшипех тултарса ăнăçлăн вĕçлерĕç. Çапла 9 ĕç кунĕ хушшинче районри колхозсем пурĕ 8.325 гектар çине тĕштырă акса хăварчĕç, вăл шутра оборона фондне хывма тата нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке тухнă облаçсемпе районсенчи колхозсене пулăшма 105 гектар акрĕç.

Районри чылай колхозсем çуракине кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа ирттерессишĕн фронтри пек пысăк хастарлăхпа ĕçлерĕç. Иккасси ялсоветĕнчи «Майăн 1-мĕш» колхоз, çуракине 7 ĕç кунĕ хушшинче пысăк пахалăхпа вĕçлесе, оборона фондне хывма 7 гектар акрĕ. Апаш ялсоветĕнчи колхозсем оборона фончĕ валли пурĕ 10 гектар акнă.

Çуракинче «Осоавиахим» колхоз уйрăмах пысăк пахалăхпа ĕçлерĕ. Колхоз тĕштырăсене пурне те сеялкăсемпе акнă, тулла сеялкăпа хĕреслĕ майпа акрĕ. Ку колхозри колхозниксемпе колхозницăсем çуракинче кулленхи ĕç нормине 150—200 процент тултарса ĕçлерĕç.

Тĕштырăсене акса пĕтернĕ хыççăн районри колхозсем çĕрулми лартма масăллăн тытăнчĕç. Майăн 19-мĕш тĕлне районра пурĕ 500 гектар çĕрулми лартнă. Колхозсем, колхозниксемпе колхозницăсем çуракинчи пур ĕçсене те майăн 22-мĕш тĕлне пĕтĕмпех вĕçлеме обязательство илчĕç.

В. КАРАУШЕВ.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

МТС ĕçе лайăхлатрĕ

Çак иртнĕ кунсенче Шăхасан МТС-ĕн трактор бригадисем çуракинчи ĕçсене лайăхрах тума тытăнчĕç. Трактор бригадисем хушшинче социализмлă ăмăрту хĕрӳллĕн пырать. Трактористсем ĕç тухăçлăхне чылай ӳстерчĕç, горючине перекетлĕн тытса ĕçлеççĕ.

МТС-ăн К. Петров ертсе пыракан 10-мĕш номерлĕ трактор бригади кăçалхи çуракинче 380 гектар сухаласа акмалла пулнă пулсан, майăн 18-мĕшĕ тĕлне бригада 471 гектар сухаласа акнă. Çак ĕçсене тунă вăхăтра горючине 1213 килограмм перекетлесе хăварнă. Бригадăри тракторист Алексей Гордеев çураки ĕçĕнчи хăйĕн планне 150 процент пурнăçланă, 348 килограмм горючи перекетлесе хăварнă. Çавăн пекех тракторист Георгий Алексеев та çуракинчи ĕçсен планне 140 процент пурнăçланă, горючине 290 килограмм перекетленĕ.

Хальхи вăхăтра бригада ытти бригадăсене çураки планне пурнăçлама пулăшать.

С. ШАДИН.
Майăн 19-мĕш. (Телефонпа).

КОММУНИСТ ĔÇРЕ ПРИМЕР КĂТАРТАТЬ

ЭЛЕК. Чăваш Сорменчи «Серп и молот» колхозра çураки организованно пырать. Колхоз кăçалхи çуракинче тĕштырăсене кĕске срокрах акса çитерчĕ.

Оборона Халăх Комиссарĕн Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказне сӳтсе-явнă хыççăн колхозниксемпе колхозницăсем ĕç тухăçлăхне татах та ӳстерчĕç. Суха тунă çĕрте П. Григорьевпа А. Павлова, акакансенчен Г. Дормидонтовпа С. Буковинин, сӳрелекесенчен Т. Егорова юлташсем кулленхи ĕç нормине яланах ирттерсе тултарчĕç, кунне 3-шер ĕçкунĕ таран турĕç.

Колхозра çураки пуçланнăранпах столовăй ĕçлет, унта кашни кунах 30—40 çын апатланать.

Çак колхозăн председателĕнче ВКП(б) членĕ Д. Соловьев тăватă çул хушши ĕçлет. Унăн пысăк опыт пур. Вăл колхозри ĕçе тĕрĕс йĕркеленĕ, çавна пула кунта пур ĕç те вăхăтра пулса пырать. Соловьев юлташ колхозниксене ĕçре вĕрентсе пырать, ĕçсене хăй пуçарса пырать. Вăл уйра пулса хăех тырă акать, ытти ĕçсене те тăвать. Унăн хастарлăхне курса, ытти колхозниксем те тăрăшса ĕçлеççĕ.

М. КУСТИКОВ.

Примерлă трактористка

КУКЕÇ, майăн 19-мĕш. (Телефонпа). ССCР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «МТС трактористчĕсене тата трактористсенчен кăкарса ĕçлемелли ялхуçалăх машинисемпе ĕçлекен колхозниксене ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ӳстернĕшĕн ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен» йышăннă постановленипе хавхаланса, Шупашкар районĕнчи машинно-тракторнăй станцин трактористки Елена Кудрявцева юлташ çуракинче паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлет.

Партипе правительство трактористсене ĕçлеме лайăх май туса пани çине ответлесе, Елена Кудрявцева сменăри нормăна кулленех 150—180 процент пурнăçласа пырать. Çак иртнĕ вунă кун хушшинче вăл ĕç тухăçлăхне вăйлăн ӳстерчĕ. Горючине 267 килограмм перекетлесе хăварчĕ. Постановленипе паллашнă хыççăн вăл кăçалхи ĕçсен планне 150 процентран кая мар пурнăçлама тата çу каçиччен 2 хĕрачана тракторпа ĕçлеме вĕрентме пулчĕ.

П. СМИРНОВ.
МТС политотделĕн начальникĕ.

Ирхи çĕртме сухине туса пĕтернĕ

КАЛИНИНО, майăн 19-мĕш. (Телефонпа). Хурăн Кăкшăмри «Красноармеец» колхоз çураки ĕçĕсене туса пĕтернĕ хыççăнах ирхи çĕртме сухине тума тытăнчĕ. Е. Степанова, Т. Александрова сухаçсем кунта та паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлерĕç. Колхоз 16,50 гектар çинче ирхи çĕртме сухи туса хăварчĕ.

Г. МАТВЕЕВ.

Кок-сагыз акма васкамаççĕ

КАНАШ. (Телефонпа). Районри Киров, Чкалов ячĕпе тăракан, «Комсомолец» тата ытти хăшпĕр колхозсем ирхи тĕштырăсене акса çитерчĕç. Киров ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Смолов юлташ) çураки планне ирхи культурăсем акас енĕпе 5 кун хушшинче вĕçлерĕ. Çак вăхăтра пурĕ 245 гектар тырă акнă, 265 гектар сухаланă.

Çураки ĕçĕнче уйрăмах колхозăн 7-мĕш бригади малта пырать. Тĕштырă культурисене бригада 4 кун хушшинче 36 гектар акнă, 39 гектар сухаланă. Сухалакансем Ф. Порфирьев, М. Сергеев юлташсем ĕç нормине 120—130 процент тултарса ĕçленĕ. Çавăн пекех колхозăн ытти бригадисенче ĕçлекен колхозниксем те пысăк хастарлăх кăтартнă. Сухаçă М. Афанасьев талăкри нормăна 150 процент тултарса пынă. Вăл кунне 4,75 ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ.

Комсомолка, çамрăк бригадир А. Гаврилова бригадăна ертсе пырас ĕçе çураки умĕн çеç тытăннă. Çапла пулсан та вăл çуракине лайăх организацилесе ирттерчĕ. Ăна райком представителĕ Айдарова юлташ ĕçре пулăшса пычĕ.

Çавăн пекех Татмăшри Чкалов ячĕпе тăракан колхозра та (председателĕ Тихонов юлташ) суртырăрисене акмалли плана 4 кун çурă хушшинче пурнăçа кĕртнĕ. Пурĕ 150 гектар акнă, 50 гектар çĕре мульчировани тунă.

Анчах та çуракинче юлса пыракан колхозсем те пур-ха. «Хĕрлĕ Çăлтăр», Ворошилов, Сталин ячĕсемпе тăракан колхозсем иртнĕ çул ялхуçалăх ĕçĕнче малта пыракан колхозсем пулнă пулсан, халĕ çуракинче кая юлса пыраççĕ. «Хĕрлĕ çăлтăр» колхоз çуракине майăн 6-мĕшĕнче çеç тухнă. Çапах та кунта ĕçе хĕрӳллĕн тытăнман. Колхозра 45 лаша. Вĕсен вăйĕпе тивĕçлĕн усă курнă пулсан, колхоз çуракине чылай малтан вĕçлеме пултарнă.

Районăн кăçал темиçе гектар кок-сагыз акмалла. Юлашки кунсем тĕлне пĕр гектар та акман. Кок-сагыз енĕпе ĕçлекен агроном Исаков çак кунсенче 26 колхозра пулнă. Анчах вăл колхозсене çӳрени никамшăн та усăллă пулман, ĕçе вăл нимĕн чухлĕ те чĕртеймен. 20 колхоз кок-сагыз вăрлăхне яровизацилеме тытăнман, ăна акма участоксем те уйăрман, ку ĕçе тума звеносем те организацилемен.

Ыйтас килет: кок-сагыз акас ĕçе организацилеме уйăрнă ответлă агроном Исаков юлташ мĕн шухăшласа пурăнать-ха ку таранччен? Пулăшу кирлĕ пулсан, вăл Исаков юлташран инçе мар. Пĕтĕм Союзри «Восткаучук» управленийĕн Чăваш республикинчи отделенийĕ инçета та мар, Канаш хулинчех вырнаçнă.

Техникăлла культурăсем акса ӳстерессине Канаш районĕнче хакламаççĕ. Малта пыракансен опытне илсе çуракинчи ĕçсене тĕпренех вăйлатмалла.

П. НИКОЛАЕВ.

Паян шкулсенче пĕлӳ тĕрĕслевĕсем пуçланаççĕ

Пирĕн шкулсем кăçалхи çул совет халăхĕ нимĕç оккупанчĕсене хирĕç туса пыракан отечественнăй аслă вăрçăн условийĕсенче ĕçлерĕç. Парти организацийĕсемпе советсем, учительсем, вĕренекенсем, шкул ачисен ашшĕ-амăшĕсем, пĕтĕм совет общественноçĕ вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене ăнăçлăн çĕнтерсе пырса, шкулсене татти-сыпписĕр ĕçлеме май туса пачĕç.

Çĕршер учительсем, пиншер шкул ачисем кăçалхи вĕренӳ çулĕнче çине тăрса ĕçленипе, вĕренӳ пахалăхне хăпартса, ăнланулла дисциплинăна çирĕплетсе пынипе, фронтпа тыла мĕн вăй çитнĕ таран пулăшса пынипе, хăйсен чăн-чăн патриотизмне палăртрĕç.

Паян шкулсем хăйсен çулталăк хушшинчи ĕçне тĕплĕн тишкерсе хаклас тапхăра кĕчĕç: шкулсенче пĕлӳ тĕрĕслевĕсем пуçланаççĕ.

Суркуннехи пĕлӳ тĕрĕслевĕсен тĕп задачи вĕренекенсем вĕренӳ çулĕ хушшинче илнĕ пĕлӳсене тĕпллĕн палăртса тĕрĕс хак парасси пулса тăрать. Çавăнпа та тĕрĕслевсене инструкцие çирĕп пăхăнса мĕнпур тимлĕхпе туса ирттермелле. Тĕрĕслевсене йăлишĕн анчах ирттерни, вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсен сăлтавĕпе витĕнсе вĕренекенсен пĕлӳне тивĕçлĕ мар çăмăллăн хаклани пулмалла мар. Тĕрĕслеве ирттерекен учитель тата ассистент хăйсен государство умĕнчи пысăк ответлăхне туйса ĕçлени кирлĕ.

Пĕлӳ тĕрĕслевĕсем шкул ачисен ответлăхне хăпартаççĕ, вĕсене тивĕçлĕ воспитани парас ĕçри пăлтă самантсенчен пĕри пулса тăраççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ тĕрĕслев вăхăтĕнче вĕренекенсене паракан ыйтусем, вĕсене çырма, разбор тума паракан материалсем воспитани парас тĕлĕшрен пахаскерсем пулмалла. Кăна шкулсенче пурте ăнланса илнĕ теме çук-ха. Шупашкар хулинчи 7-мĕш вăтам шкулта диктовкăсем валли хатĕрленĕ текстсене Çутĕç Халăх Комиссариачĕ пăрахăçа кăларнă.

Пĕлӳ тĕрĕслевĕсем, вĕренекенсен пĕлĕвĕсене тĕплĕн палăртса хакланипе пĕрлех, учительсен вĕренӳ çулĕ хушшинчи ĕçĕн пахалăхне хаклама та май пáраççĕ. Шкул директорĕсемпе заведующийĕсен, завучсен тĕрĕслевсем мĕнле пынине тĕплĕн контрольлесе пымалла, отметкăсене Çутĕç Халăх Комиссариачĕ çирĕплетнĕ нормăсем тăрăх тĕрĕс лартнипе лартманнине тишкерсе пымалла. Тĕрĕслев протоколĕсене йăлишĕн кăна алă пусса çирĕплетни ан пултăр. Учитель хăйĕн вĕренӳ çулĕ хушшинчи шăйрăкĕсене лайăх отметкăсемпе витсе хăварма хăтланни пулмалла мар.

Райçутĕç пайĕсенче ĕçлекенсен вырăнĕ халь шкулта, пĕлӳ тĕрĕслевĕсене ирттернĕ çĕрте пулмалла. Пĕлӳ тĕрĕслевĕсене ăнăçлă ирттерессишĕн, тĕрĕслевсем вăхăтĕнче пăлăракан çитменлĕхсене çийĕнчех тӳрлетсе пырассишĕн вĕсем государство умĕнче ответлă.

Парти организацийĕсен, советсен, комсомолăн, совет общественноçĕн задачи шкулсене пĕлӳ тĕрĕслевĕсене ăнăçлăн ирттермешкĕн пур майсемпе те пулăшасси пулса тăрать. Вĕренекен ачасене ку вăхăтра пур енчен те пулă. Шу пани кирлĕ: вĕсене тĕрĕслеве хатĕрленме май парас пулать, вĕренӳ ĕçĕнчен уйăрса ытти ĕçсене яни ан пултăр, вĕсене вăхăтра апатлантармалла, вĕсен кану вăхăтне тĕрĕс йĕркелемелле.

Пĕлӳ тĕрĕслевĕсене ăнăçлăн ирттерес тĕлĕшпе шкул, вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсем, партин вырăнти организацийĕсемпе советсем, пĕтĕм совет общественноçĕ таччăн çыхăнса ĕçлемелле.

А. ОТАЧКИН.

Пĕлӳ тĕрĕслевне организованно ирттерме тăрăшатпăр

ИШЛЕИ. (Телефон тăрăх). Паянтан тытăнса районри пур шкулсенче те ачасен суркуннехи пĕлӳ тĕрĕслевĕсем пуçланаççĕ. Пĕлӳ тĕрĕслевĕсене ирттерме районри çутĕç отделĕ кашни шкулах хăйĕн представителĕсене яларса янă. Çутĕç отделĕн представителĕсен шутĕнче штата кĕмен инспекторсем, вĕренӳ ĕçĕнчи опытлă учительсем тăраççĕ. Пĕлӳ тĕрĕслевĕсем пуçламăш шкулсенче майăн 25-мĕшĕнче, туллимар вăтам шкулсенче—майăн 28-мĕшĕнче, вăтам шкулсенче — майăн 30-мĕшĕнче пĕтмелле. Июнĕн 1-мĕш тĕлне пĕтĕм районри пĕлӳ тĕрĕслевĕсен итогĕ хатĕр пулмалла.

Тĕрлĕ сăлтавпа шкула çӳреме пăрахнă ачасен йышĕ, пĕтĕм районĕпе илсен, чылай пысăк. Вĕсене шкула çĕнĕрен çӳретес пирки çутĕç отделĕ тата уйрăм шкулсем те сахал мар тăрăшнă. Ачасен ашшĕ-амăшĕсемпе уйрăм калаçусем туса ирттернĕ, ачасене вĕрентме кирли çинчен ăнлантарса панă. Çакна пула вĕренме пăрахнисенчен районĕпе 140 ача шкулсене çĕнĕрен çӳреме тытăнчĕç. Шкулсем çакăн пек ачасен пĕлӳне хăпартас тĕлĕшпе пикенсех ĕçлерĕç, ĕçлеççĕ те. Кашни кунах, уроксем пĕтнĕ хыççăн, учительсем ун пек ачасене уйрăммăн вĕрентеççĕ.

Суркуннехи пĕлӳ тĕрĕслевне хатĕрленес тĕлĕшпе районра уйрăмăнах Ярапайкассинчи тата Çĕньял-Покровскинчи туллимар вăтам шкулсем лайăх ĕçлерĕç. Ярапайкассинчи шкул директорĕ К. И. Тетерина юлташ, вĕренӳ çулне ăнăçлăн вĕçлес тесе, пĕтĕм вăйне хурса ĕçлет. Вăл тăрăшнипе пула кунти учительсен коллективĕ те шкулти вĕренӳ ĕçĕсене аван туса пырать. Вĕренӳ çулĕн 3-мĕш чĕрĕкĕнче Ярапайкасси шкулĕнчи вĕренекенсенчен 94 проценчĕ вĕренӳре лайăх паллăсемпе ĕлкĕрсе пынă. Çĕньял-Покровски шкулĕнче (директорĕ П. А. Ефремов юлташ) вĕренӳре аван ĕлкĕрсе пыракансен йышĕ халĕхи вăхăтра 93 процент шутланать.

Çак хушăрах районра начар ĕçлекен шкулсем те пур. Тĕслĕхе Чантăрти пуçламăш шкула илме пулать. Чантăр шкулĕн заведующийĕ А. И. Иванов юлташ кăçалхи вĕренӳ çулĕнче хăй шкулĕнчи вĕренӳ ĕçĕсене тивĕçлĕ вырăна лартаймарĕ. Ытти шкулсенчи пуçламăш классенче шкула çӳреме пăрахнисем сахал шутланаççĕ. Чантăр шкулĕнче 14 ача шкула çӳремеççĕ. Шкула йĕркеллĕ çӳренĕ ачасен те пĕлӳлĕхĕ çӳллĕ вырăнта мар.

Вăтам шкулсен аслă класĕсем кăçал колхозсене ялхуçалăх ĕçне пĕлекен кадрсем хатĕрлесе памалла. Ку тĕлĕшпе Тивĕшри, Анат-Кĕнерти тата Ишекри вăтам шкулсем чылай тăрăшса ĕçлерĕç. Тивĕшри вăтам шкулта 36 çамрăк трактора тата унпа мĕнле ĕçлемеллине вĕренсе тухать.

Пĕлӳ тĕрĕслевĕсем вăхăтĕнче районри 12 шкулта ачасем валли буфет ĕçлемелле. Вăл буфетсем валли районри суту-илӳ отделĕ 1.500 килограмм çăнăх уйăрса панă.

Т. ГАГАРИН.
Районри çутĕç отделĕн заведующийĕ.

Предприятисемпе артельсенчи социализмлă ăмăрту

Железнодорожниксен паха ĕçĕсем

КАНАШ, майăн 19-мĕш. (Телефонпа, хамăр корр). Хусан чугунçулĕн Канаш станцинчи работниксем пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура паха ĕçсем тăваççĕ. Май уйăхĕн малтанхи 15 кунĕ хушшинче кунти машинистсем йывăр тиенĕ вагонсем йышлă кăкарнă составсене нумай илсе тухнă.

Йывăр составлă паровозсене вăхăтра, пĕр аварисĕр çӳретес тĕлĕшпе уйрăмах машинист Романов юлташ лайăх тĕслĕхсем кăтартать. Майăн 15-мĕшĕнче вăл 1900 тонна тиенĕ состава Канашран Сергача нормăпа пăхнинчен хăвăртрах илсе çитернĕ. Çак маршрутпах машинист-коммунист Ремизевич юлташ 2.020 тонна тиенĕ состава, машинист Воронцов юлташ 171 вагон кăкарнă состава вăхăтра тата пĕр аварисĕр илсе тухнă.

Депори работниксем хушшинчи ăмăртура яланхи пекех комплекснăй бригада малта пырать. Унăн членĕсем хăйсен ĕç тухăçлăхне уйăхран уйăха ӳстереççĕ. Май уйăхĕн малтанхи вунă кунĕнчи нормăна электросварщик С. Жигунов юлташ 341 процент, котельщик Григорьев—193 процент, слесарь Ермохин—170 процент, тимĕрçĕ Федоров 160 процент тултарнă.

Станцири дежурнăйсем поездсене вăхăтра йышăнса вăхăтра ăсатассишĕн кĕрешеççĕ. Ку тĕлĕшпе таварлă станцинчи Дубов дежурнăйăн смени уйрăмах лайăх ĕçлет. Унăн смени транзитнăй вагонсене станцире тытса тăрас вăхăта 6 сехет таран чакарнă. Иванова дежурнăйăн смени те çакăн пек лайăх тĕслĕхсем кăтартать. Станцири грузчиксен Борисов юлташ ертсе пыракан бригади вагонсене тиесе пушатас нормăна 200 процента çити тултарать.

Майăн 17-мĕшĕнче, канмалли кун, чугунçул çинче воскресник туса ирттерчĕç. Воскресникре 600 çын ытла пулчĕ. Вĕсем вагонсем çинчи таварсемпе япаласене пушатас тĕлĕшпе ĕçлерĕç. Çавăн хыççăн станцире вагонсене йышăнса ăсатас ĕç чылай лайăхланчĕ, вагонсем пушă тăрас вăхăт 8 сехет таран чакрĕ.

Вăрман ĕçĕнче тăрăшса ĕçленĕшĕн

КАНАШ. Яманкассинчи Доронин ячĕпе тăракан колхоз вăрман хатĕрлес плана срокчен тата ытлашшипех тултарчĕ. Вăл Йĕпреç участокĕнче 500 кубометр касса турттарас вырăнне 650 кубометр касса турттарчĕ. Вăрман хатĕрлеме янă колхозниксем пурте пĕр çын пек тăрăшса ĕçлерĕç. Вĕсенчен 9 çынна колхоз правленийĕ материсем, тутăр, укçа парса премилерĕ. Вăрман ĕçĕнчи стахановец С. Захаров юлташ 7 метр матери, 4 тутăр илчĕ.

И. МАКСИМОВ.

Гитлер палачĕсем совет граждăнĕсене асаплантарни

СТОКГОЛЬМ, майăн 19-мĕш. (ТАСС). Фашистсен «Дейче цейтунг ин Остланд» хаçачĕ пĕлтернĕ тăрăх, нумаях пулмасть Минскра 150 гражданина асаплантарса вĕлернĕ.

Балти тинĕсĕ çывăхĕнчи совет республикисенче гитлерла террор çавтери анлă сарăлнă. Çулте асăннă хаçатах çакна пĕлтерет: Вильнăра 16 литовеца персе вĕлернĕ. Германии ятарласа тунă сучĕсем талăкĕ-талăкĕпе «ĕçлеççĕ». Каунас хулинче 24 çулти Триониса, Ригăра—Баратинскиса тата Янсона, икĕ нимĕçе—Рустпа Зундмахера асаплантарса вĕлернĕ. Веррора 20 çынна арестленĕ. Чугунçул çинче ĕçлекен 6 латыша Ригăра 2 çултан пуçласа 3 çул таран каторгăра ĕçлемелле тунă.

«Хĕçпăшала законсăр тытса усранăшăн» суд тунисем уйрăмах нумайланнă. Оккупантсем, асаплантарса вĕлерессипе хăратса, хĕçпăшалсемпе боеприпассене васкавлăн леççе пама халăха приказ панă. Гитлеровецсем çавăн пекех кĕнекесене, хаçатсене, плакатсене, открыткăсене те пĕтĕмпех леççе пама хушаççĕ.

ГЕРМАНИРЕ ПУРНĂÇ НАЧАРЛАННИ

НЬЮ-ЙОРК, майăн 19-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин Берлинри корреспонденчĕ Германири пурнăç çинчен интереслă фактсене çырса пĕлтернĕ, вăл корреспондента хупса усранă хыççăн нумаях пулмасть ирĕке кăларнă.

Пĕтĕм çĕршыв Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра аманнă çынсемпе тулнă. Госпитальсем тулса ларнă пирки влаçсен халĕ аманнисене уйрăм хуçасен çуртĕсене вырнаçтарма тивет.

Çĕршывăн экономикăллă положенийĕ те хытă начарланнă. Апат-çимĕçсемпе чĕртаварсен запасĕсем пĕтсе çитеççĕ. Промышленность япаласем туса кăларасси пĕрмаях чакса пырать. Ĕçри хăвăртлăха чакарнăшăн Германи влаçĕсем асаплантарса вĕлерес йĕрке тунă пулин те, предприятисенче саботаж малалла пулса пырать.

Ĕç вăйĕ тата чĕртавар питех те çитменлĕхĕ пирки нумай предприятисем пĕтĕм вăйпа ĕçлеймеççĕ. Асаплантарассипе хăратса, фашистсем ĕçе лайăхлатма хăтланаççĕ. Ĕç вăйĕн тата чĕртаварăн резервĕсем çинчен тĕрĕс мар пĕлтернĕшĕн асаплантарса вĕлермелле туса фашистсем закон кăларнă.

Уйрăмах Германин чугунçулĕсем пысăк йывăрлăхсем тӳсеççĕ, вĕсем çар хатĕрĕсемпе çарсене турттарас ĕçе çителĕклĕ туса пыраймаççĕ. Пассажирсене çӳреме йăлтах чарнă.

Апат-çимĕç тупма йывăр пирки çĕршывра вăрттăн суту-илӳ тăвасси («хура пасар») анлăн сарăлнă. Спекуляци тунăшăн асаплантарса вĕлерес йĕрке тунă пулсан та, спекуляци çавтери хытă сарăлса кайнă. Нимĕçсем кăна мар, итальянецсем те, вăл шутра Италин Берлинри посольствинче аслă вырăнта тăракан çынсем те, спекуляци тăваççĕ.

Экономикăри çак йывăрлăхсем Англи авиацийĕ Германи хулисем çине тапăннă пирки татах та пысăкланса пыраççĕ. Англи авиацийĕ тапăннисем нимĕç халăхне йывăр шухăша яраççĕ.

Шкода завочĕсенчи саботажла ĕçсем

НЬЮ-ЙОРК, майăн 16-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин Лондонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Шкодăн Пльзеньри завочĕсенче, нумаях пулмасть Англи авиацийĕ пырса тапăннă хыççăн, саботажла ĕçсем нумайланнă. Нимĕçсем Пльзеньре çирĕп йĕркесем туса хунă. Пльзень хула управлени администрацийĕнчен юлашки чех депутатсене те кăларса янă. Шкода завочĕсенче кашни пилĕк чех рабочийĕ пуçне хĕçпăшаллă хурал тăрать.

Голландире Гитлера хирĕçле выступленисем пулнă

БЕРН, майăн 19-мĕш. (ТАСС). Голландири радио пĕлтернĕ тăрăх, Гиммлер Голландие пынă. Гиммлер унта çĕршывăн чылай районĕсенче пысăк пăлханусем пулнă пирки пыни çинчен калакан хыпарсем пур. Голланди патриочĕсене асаплантарса вĕлерни çине халăх саботажсем тата диверсисем нумай туса ответленĕ. Гаага хулинче Германие хирĕçле демонстраци пулса иртнĕ. Роттердамра Голланди патриочĕсем нимĕçсен оккупацилле çарĕсен боеприпасĕсен складне сирпĕнтерсе янă. Нимĕçсен заказĕсене тăвакан предприятисенче ĕç тухăçлăхĕ хытă чакнă.

Норвегин никама пăхăнманлăхĕн национальнăй уявĕ

ЛОНДОН, майăн 18-мĕш. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Норвегин никама пăхăнманлăхĕн национальнăй праздникне уявланă май ĕнер Лондонра пуху пулса иртнĕ. Çав пухура Англин тинĕс министрĕ Александер тата Норвегин ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Трюгве Ли сăмах тухса каланă.

Александер хăйĕн сăмахĕнче çакна палăртнă: Норвегин флочĕ халĕ 63 карапран тăрать, унăн личнăй составĕнче матроссемпе офицерсем 400 çын. Норвегин суту-илӳ флочĕ те çавтери паха пулса тăрать, унăн тоннажĕ 1940 çулта 5 миллион тонна пулнă, унăн пилĕк пайĕнчен тăватă пайĕ нимĕçсем тытса илесрен çăлăнса юлнă, Норвегин Англири правительствин контрольне куçнă.

Норвегин ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Трюгве Ли çапла каланă: норвежецсем гитлерла оккупантсене хирĕç кĕрешнине мĕнпур тĕнче кăмăллать. Норвеги халăхĕ,—тесе каланă малалла Ли,—тĕрĕслĕх унăн енче пулнине пĕлет. Норвеги патриочĕсен хăватлă союзниксем пурри пирки Ли хăй кăмăллă пулни çинчен каласа панă.

НЬЮ-ЙОРК, майăн 19-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Германи оккупанчĕсем чарнă пулсан та, Норвегин никама пăхăнманлăхĕн национальнăй праздникне Норвегире пур çĕрте те уявланă. Осло хули çывăхĕнче сăртсем хушшине вăраххăн тивсе çурăлса каякан бомбăсене вырнаçтарнă пулнă, вĕсем ирхине 6 сехетре—ытти çулсенче çав уяв ячĕпе орудисенчен персе салют панă вăхăтра—çурăлса сирпĕннĕ. Çĕрле Осло патĕнчи Колзак текен сăрт çине Норвеги ялавне вăрттăн çакса янă.

Çав кун Норвеги патриочĕсем Осло çывăхĕнчи пысăк склад çине тапăннă. Унта халăхран туртса илнĕ йĕлтĕрсем усраннă пулнă. Тапăннă чухне 20 пин мăшăр йĕлтĕре пĕтерсе тăкнă.

Норвеги никама пăхăнманлăхĕн национальнăй праздникне Швецире те уявланă. Унта официальнăй учрежденисен çурчĕсем тата уйрăм çынсен çурчĕсем çине Норвеги флагĕсене кăларса çакнă.

Англи самолечĕсем Германи крейсерĕ çине тапăннă

ЛОНДОН, майăн 19-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, майăн 17-мĕшĕнче Тронхейм фортĕнче Германин «Принц Евгений» крейсерне курнă, ăна унччен Англин подводнăй лодки сиенленĕ пулнă.

Майăн 18-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле крейсер Норвегирен Германи докĕсем патне кайма тухнă. Ун çине вара Англи самолечĕсен йышлă ушкăнĕ тапăннă. Икĕ торпеда крейсера тĕл тивнĕ. «Принц Евгений» крейсера ăсатакан виçĕ эсминец çине самолетсем 30 ярд çӳллĕшĕнчен пенĕ.

Сывлăшра Германи истребителĕсене хирĕç çапăçса «Мессершмитт-109» йышши 5 самолета пĕтерсе тăкнă тата ыттисене нумайĕшне сиенленĕ. Англи авиацийĕ 9 самолет çухатнă.

Ирĕклĕ Францин Лăпкă океанри утравĕсем союзниксемпе пĕр шухăшлă

ЛОНДОН, майăн 19-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Ирĕклĕ Францин пехотипе тинĕс çар вăйĕсем Америкăн Çĕнĕ Каледонири войскисемпе пĕр шухăшлă пулса ĕçлеççĕ. Ирĕклĕ Францин Лăпкă океанри утравĕсем, Уоллис утравĕсĕр пуçне, пурте хăйсем де Голль генерал майлă пулни çинчен пĕлтернĕ.

—⊙—

Чăвашсен Академиллĕ театрĕнче çуллахи концертсен сезонĕ уçăлас умĕн

Чăвашсен Академиллĕ театрĕнче çуллахи концертсен сезонĕ уçăлать. Сезон майăн 29-мĕшĕнче Мускаври музыкăллă комедисен Государственнăй театрĕн постановкипе уçăлмалла. Малтан, майăн 29, 30 тата 31-мĕш кунĕсенче, театр Кальман çырнă 3 пайлă «Марица» ятлă оперетăна лартса парать. Ку театрăн гастролĕ июнĕн 14-мĕшчен пырать. Çак вăхăтра вăл, «Марица»-сăр пуçне, «Сильва», «Гейма» «Взаимная любовь», «Роз-Мари» тата «Грозная Роза» ятлă музыкăллă комедисене лартса памалла.

Çуллахи сезона ирттермелли план тăрăх малалла Шупашкара «Молдавия» джаз-оркестрĕн коллективĕ, Украина юррисемпе ташшисен ансамблĕ, Удмурт юррисемпе ташшисен ансамблĕ, Совет Союзĕн Пысăк Театрĕн солисчĕсем тата Мускавпа Ленинградри эстрада артисчĕсем килмелле.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Искусство ĕçĕсен Управленийĕ июль уйăхĕнче «Драмăпа комедисен Çĕнĕ театрĕн» постановкисене кăтартса парас ĕçе организацилет.

Гастрольле концертсен çуллахи сезонĕ сентябрĕн 1-мĕшчен пымалла.

Г. МОРДКОВИЧ.
Чăвашсен Академиллĕ театрĕн директорĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ВОЕНТОРГУ ТРЕБУЮТСЯ
мужские парикмахеры.
Обращаться: ул. Ленина, 2.

СРОЧНО ТРЕБУЮТСЯ
мастера мебельщики и обувщики.
Обращаться по адресу: гор. Чебоксары, ул. Ленина, 11, контора Чуваштторга.
Телефон 2—26.

Чебоксарскому хлебокомбинату
ТРЕБУЮТСЯ
на постоянную работу:
кормовщик, ст. бухгалтер по транспорту, счетовод-картотетчик, счетные работники временно.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 153

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6, 58 84 п: м: